**Районăн 2006 çулхи 8 уйăхри социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем**

# Пурнăçлани лайăх та, тумалли татах нумай

Пурнăç пĕр вырăнта тăманни, унăн аталанăвĕ çĕнĕлĕхсемпе пуянланса пыни тата çынсен пурнăç шайĕ пĕрлехи тăрăшулăхпа тепĕр картлашка çӳлелле хăпарни хамăрăн социаллă пурнăçпа экономика çине татах та тимлĕрех пăхма ыйтать. Çакă пирĕн районта иккĕмĕш вырăнта тăманнине Муркаш Енĕн кăçалхи 8 уйăхри социаллă-экономика аталанăвĕн кăтартăвĕсем те уçăмлăн çирĕплетсе параççĕ. Аталану районăн 2006–2010 çулсем валли хатĕрленĕ социаллă-экономика аталанăвĕн Программипе тата район администрацийĕпе Чăваш Республикин Министрсен кабинечĕ хушшинчи туслă ĕç Килĕшĕвĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать. Пытарма çук, çакă район аталанăвĕпе кун-çулĕн кашни утăмĕнче, кашни отраслĕнче палăрать.

**Ял хуçалăхĕ**

Выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илнине тишкерни-хакланин кăтартăвĕсем маларах асăннă Килĕшӳре палăртнă енсене хуçалăхсен пур категорийĕсенче, çав шутра килти хушма хуçалăхсенче те, пурнăçланине



**“Восток” ял хуçалăх производство кооперативĕнче 8 уйăхра сыснасен пĕтĕмĕшле ӳт хушаслăхĕ 25307 килограмм пулнă. Август уйăхĕнче аш туса илесси 3474 килогрампа танлашнă. Хуçалăх çак тапхăрта 232 çура илнĕ. Пĕчĕк хуçалăхăн ӳсĕмлĕ аталанăвĕнче эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Э. Сальниковапа Н.Сырова ĕçченсен тӳпи те пĕчĕк мар.**

çирĕплетеççĕ. Уйрăммăн илсен аш-какай туса илесси пĕлтĕрхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 13,6 процент, сĕт сăвасси – 7,1 процент ӳснĕ. Çав вăхăтрах пур категориллĕ хуçалăхсенче те сыснасен йышне 22,7 процент ӳстернĕ пулсан, майракаллă шултра выльăхсен кĕтĕвĕ ял хуçалăх производство кооперативĕсенче 9 процент чакнă. Майракаллă шултра выльăхсен йышĕ уйрăмах “Сеятель” ял хуçалăх производство кооперативĕнче (34 процент), Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхра (19 процент), К.Иванов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра (10 процент) сахалланнă.

Халăхăннипе пĕрле шутласан, районта пĕр ĕне пуçне сĕт сăвасси 2811 килогрампа танлашать пулсан, ял хуçалăх предприятийĕсенче – 2717 килограмм. Районта пĕтĕмĕшле сĕт туса илнин калăпăшĕнче килти хушма хуçалăхсен тӳпи 71 процент.

Пĕтĕмĕшле сĕт сăвассипе тата аш-какай туса илессипе “Ударник” (18 процент), “Свобода” (11 процент), Ильич яч. хис. (7 процент), “Рассвет” агрофирма” (6 процент) хуçалăхсен тӳпи чи пысăккисен шутĕнче пулнăран çак хуçалăхсенчи кашни каялла утăм район аталанăвĕ çинче палăрать. Çав вăхăтрах çултан çул сĕт сăвассине “Колос”, “Сеятель”, “Хлебороб” хуçалăхсенче чакарса пыни район сăн-сăпатне илем кӳмест. Кăçалхи 8 уйăхра сĕт сăвассине К.Иванов яч. хис. хуçалăхра 24 процент, Чапаев яч. хис. кооперативра 15 процент, “Лидер” агрофирмăра 11 процент чакарни те ырă пулăм мар.

Аш-какай туса илессипе “Хлебороб” (65 процент чакарнă), “Чемеево” (30 процент), К.Иванов яч. хис. (25 процент), “Передовик” ( 16 процент), “Колос” (14 процент) хуçалăхсенчи чакăм пулман пулсан районăн экономика ӳкерчĕкĕ ку тĕлĕшпе пысăк улшăну тӳсмĕччĕ. Майракаллă шултра выльăхсемпе сыснасен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ “Сеятель”, “Передовик”, К.Иванов яч. хис. хуçалăхсенче палăрмаллах пĕчĕккĕ. Пăрусем илессипе “Колос”, “Хлебороб”, “Сеятель”, К.Иванов яч. хис. хуçалăхсенче, сысна çурисем илессипе Ленин яч. хис., Е.Андреев яч. хис. хуçалăхсенче иртнĕ çулхи шая та çитеймени асăннă хуçалăхсенче ĕçлемеллисем чылай пулнине кăтартса парать.

Производство калăпăшне пĕчĕклетнипе пĕрлех продукцин хăй хаклăхĕ ӳссе каять. Ку вара хуçалăхсен тупăшлăхĕпе тӳреммĕнех çыхăннă. Чылай чух хуçалăхсенче продукци хăй хаклăхĕ сутлăх хакĕнчен ӳссе кайни экономикăна малалла уттармасть. Акă, тĕслĕхрен, иртнĕ 8 уйăхра майракаллă шултра выльăхсен чĕрĕ виçин пĕр килограмм хăй хаклăхĕ районта вăтамран 41, 35 тенкĕ пулнă пулсан, “Колос” хуçалăхра вăл 151,30 тенкĕпе, “Сеятель” кооперативра 98,28 тенкĕпе танлашрĕ. Çапла вара призводство хăй хаклăхĕ сутнă хакран асăннă хуçалăхсенче 3,6 тата 2,4 хут пысăкрах. Çавнашкалах пĕр килограмм сĕт хăй хаклăхĕ “Колос” хуçалăхра 8 тенкĕ те 50 пус пулсан, вăл 6 тенкĕ те 16 пуспа сутăнать. К.Иванов яч. хис. кооперативра çак шайлашу 6,80 тата 5,61 тенкĕпе танлашать. Ку хуçалăхсем тăкаклă ĕçлени куçкĕрет.

Сысна ĕрчетес ĕçре выльăхсене типпĕн тăрантарас технологие алла илнисем ку отрасль тупăшлă пулма пултарнине ĕçпе кăтартса параççĕ. Сысна какайĕн тĕп хăй хаклăхĕнче апат йышăнать. Сыснасене пĕр центнер ӳт хуштарма район вăтамран 8,6 центнер апат единици тăкакланă пулсан, “Колос” хуçалăхра вăл 23,4 центнерпа, К.Иванов яч. хис. кооперативра 11,1 центнерпа, “Сеятель” хуçалăхра 10,8 центнерпа танлашать. Çак ĕç валлиех Ильич яч. хис. хуçалăхра 5,1 центнер, “Рассвет” агрофирмăра 5,4 центнер, “Оринино” кооперативра 6,1 центнер апат единици тăкакланă. Юлашкинчен асăннă хуçалăхсенче апат тăкаклассине иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен самай пĕчĕклетме пултарнă. Ăна кура пĕр центнер сысна какайĕ туса илессин хăй хаклăхĕ те 29, 34, 29 процент пĕчĕкленнĕ. Пулса тухнă лару-тăрура продукци хăй хаклăхне чакарса баланслă апат рационĕпе продуктивлăха ӳстерме малта пыракан технологисене алла илмелле тата ĕç условийĕсене çĕнĕлле йĕркелемелле.

**Промышленность**

Сакăр уйăх пĕтĕмлетĕвĕсем районта промышленность продукцийĕ кăларасси çулталăк каяллахинчен 11 процент ӳснине çирĕплетеççĕ. Çапла вара ку ĕç виçи 285 миллион тенкĕпе танлашать. Промышленность продукцийĕ туса илесси ӳснинче “Сеспель” чикĕллĕ яваплăхлă общество



**Районăн промышленность аталанăвĕнче çăкăр пĕçерекенсен тӳпи те çук мар. Эсир сăн ӳкерчĕкре “Моргауши-Хлеб” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн гендиректорĕн çумне Е.Васильевана (сулахайри) Людмила Аркадьева тата Галина Викторова çăкăр пĕçерекенсемпе çĕнĕ технологие алла илессипе ĕçленĕ вăхăтра куратăр.**

тӳпи пысăк. Ку предприятире мал туртăмлăх виçи 139,9 процентпа, предприятин районти промышленность продукцийĕсен производствинчи калăпăшĕ 48,5 процентпа танлашать. Çав вăхăтрах продукци кăларасси “Муркашри кирпĕч завочĕ” уçă акционерлă обществăра 23 процент, “Муркашри сĕт завочĕ” акционерлă обществăра 16 процент, “Муркашагропромхимире” 3 процент чакнă.

**Суту - илӳ**

Килĕшӳ условийĕсене пурнăçласа районти суту-илӳ предприятийĕсем аталану çулĕнчен пăрăнмарĕç. Пур енпе те шутласан, ваккăн сутмалли тавар çаврăнăшĕ 223096,6 пин тенкĕпе танлашрĕ. Çулталăк каяллахи кăтартуран вăл 15 процент пысăкрах. Ваккăн сутнă тавар çаврăнăш калăпăшĕнче апат-çимĕç продукчĕсен тӳпи 82 процент чухлĕ. Çулталăк пуçланнăранпа пĕр çын пуçне тавар сутасси, пĕчĕк бизнес представителĕсене те шута илсен, 8448,4 тенкĕпе танлашать. Вăл шутран Мăн Сĕнтĕр райповĕпе – 7319 тенкĕ, Муркаш райповĕпе –



**Районта ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш ӳснинче “Винный погребок” магазинра ĕçлекен Галина Спаскина завмагпа ( суту-илӳри ĕç стажĕ 30 çул) Раиса Алексеева сутуçăн тӳпи те пысăк. Августра кăна çак магазин 420 пин тенкĕлĕх тавар сутнă.**

6180 тенкĕ.

Пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăшра эрех-сăра тӳпи 26 процент. Ку вăл çулталăк каяллахинчен 6 процент сахалрах. Кăçалхи сакăр уйăхра районти пĕр çын пуçне сутнă алкоголь виçи 7 литр та 870 грампа танлашать. Пĕлтĕр ку кăтарту 6 литр та 200 грамм пулнăччĕ. Çак лару-тăрура халăха суя çулпа хатĕрленĕ эрех-сăраран хӳтĕлесе асăннă продукцин çаврăнăшне çирĕп тĕрĕслесе тăрасси малти вырăна тухать.

Хатĕрлев ĕçĕ-хĕлĕ вăй илсе пырать. Кăçалхи 8 уйăхра хатĕрлев тавар çаврăнăшĕ 16328 пин тенкĕне çитрĕ, пĕлтĕрхинчен 16 процент пысăкрах. Услугăсен çĕнĕ тĕсĕсене аталантарни çынсене ĕçпе тивĕçтерме çул уçать. Çак енпе кайса 8 уйăхра тĕрлĕ отрасльсенче 23 хушма ĕç вырăнĕ уçма май килнĕ.

Январь-август уйăхĕсенчи тӳлевлĕ услугăсен калăпăшĕ 44757,5 пин тенкĕ. Ку вăл паянхи хаксемпе пĕлтĕрхи шайран 36 процент пысăкрах. Çав шутра “Моргаушрайбыт” чикĕллĕ яваплăхлă общество çаврăнăша 46, 9 процент ӳстерчĕ пулсан, “Нежность” чикĕллĕ яваплăхлă общество 75 процент чакарчĕ.

**Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх. Строительство**

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама палăртнă программăна пурнăçлассипе тĕллевлĕ ĕçсем пыраççĕ. 8 уйăхра 548 гражданина 414 пин тенкĕлĕх çăмăллăхсем панă. Халăхăн парăмĕ вара паянхи куна 367 пин тенкĕпе танлашать. Парăмçăсенчен парăмсене судпа шыраса илме 228 материал тăратнă, пурĕ 1378,4 пин тенкĕлĕх.

Инноваци программипе килĕшӳллĕн асăннă Килĕшĕве пурнăçласа инженери тата социаллă инфраструктура объекчĕсем тăвасси малалла пырать. Январь - август уйăхĕсенче пур финанс çăлкуçĕсенчен те пĕтĕмпе 168028,1 пин тенкĕ инвестициленĕ. Çакă та пĕлтĕрхинчен 12 процент нумайрах. Хута янă пурăнмалли çурт-йĕрсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 12440 тăваткал метрпа танлашса пĕлтĕрхи виçерен 16 процент иртрĕ.



**Çакнашкал çуртсем çĕкленеççĕ Муркашра “Моргаушская” МСО вăйĕпе.**

Кăçалхи сакăр уйăхра 2 километр та 620 метр çĕнĕ автоçулсем тунă. Социаллă ипотека кредичĕ илмелли программăпа 5 çемье 800 пин тенкĕ укçа илнĕ. “Çамрăк çемье” программăпа 7 çамрăк çемьене 3345 пин тенкĕлĕх кредит панă. Кунсăр пуçне яллă вырăнти специалистсене каялла тавăрса памалла мар 3390 пин тенкĕлĕх субсидиленĕ.

**Финанс тата кредит**

Район бюджечĕн тупăш тата тăкак пайĕсем пурнăçланасси палăртнă калăпăшпах пулса пынă. Январь–августра бюджета 158156 пин тенкĕ пырса кĕнĕ. Вĕсенчен



**“Районта кашни пус шутра”,– теççĕ район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕн çумĕ Нина Данилова тата кунти ертсе пыракан специалист Надежда Тихомирова.**

харпăр хăй тупăшĕ – 14866,2 пин тенкĕ (пĕтĕмĕшле тупăшăн 9 проценчĕ). Тăкак пайне 141956,7 пин тенкĕ пурнăçланă. Тăкаксен 47 проценчĕ “Вĕрентӳве” аталантарма, 17 проценчĕ “Сывлăх сыхлавĕпе спорт” çине, 0,8 проценчĕ “Социаллă политикăна” аталантарма кайнă.

**Социаллă политика**

Январь–август уйăхĕсенче районти вăтам ĕç укçи 3257 тенкĕ пулнă. Çав вăхăтрах ял



**Ялсен социаллă пурнăçĕнче Культура çурчĕсемпе ял клубĕсем те кайри ретре мар. Çакна Ильинка ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинчи Культура çуртне чĕрĕк ĕмĕр ертсе пыракан Эльвира Геннадьевна Бронина та лайăх ăнланать. Çавăнпах вăл 2005 çулта Культура çуртне газпа ăшăтасси çине куçарчĕ, харпăр хăй вăйĕсемпех çурта тул енчен тата шалтан юсама мехел çитерчĕ.**

хуçалăхĕнче – 1822 тенкĕ, промышленность отраслĕнче – 4886 тенкĕ, строительствăра – 5998 тенкĕ, социаллă сферăра – 3550 тенкĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта 10520 пенсионер пулнă. Вĕсене пенси укçи 191 миллион тенкĕ тӳленĕ. Уйăхри вăтам пенси виçи пĕрремĕш çур çул çулталăк каяллахинчен 295 тенкĕ пысăкрах пулнă та 2279 тенкĕпе танлашнă.

48 çын официаллă ĕçсĕр тесе шутланаççĕ.

Сакăр уйăхра 250 ача çуралнă ( çулталăк каяллахинчен 7 ача нумайрах). Çав вăхăтрах 459 çын вилнĕ ( пĕлтĕрхинчен 21 çын нумайрах). Çын вилесси çураласлăхран 1,8 хут пысăкрах.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономикăпа прогноз управленийĕн пуçлăхĕ.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**